25-мӗш ҫул тухать. Хакӗ 15 пус.

1942
ОКТЯБРЬ
1
КĔҪНЕРНИКУН
229 (6164) №

Пӗтӗм тӗнчери пролетарисем, пӗрлешӗр!

ЧĂВАШ КОММУНИ

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАҪАЧĔ

Ӗҫсынни депутачӗсен Шупашкар райсовечӗн исполкомӗпе ВКП(б) райкомӗ тӑратнӑ тӑрӑх, пысӑк ӗҫ тухӑҫлӑхӗ кӑтартнӑшӑн тата машинӑсемпе тракторсен паркӗпе лайӑх усӑ курнӑшӑн, ялхуҫалӑхӗнче малта пыраканссен республикӑри Хисеп хӑми ҫине ҫаксене кӗртнӗ·

Шупашкар МТС-ӗ тӑрӑх:

124. Трактористка **Е. Ф. Кудрявцева.** Вӑл ҫулталӑкри ӗҫ планне хӑйӗн сменинче 161 процент тултарнӑ, 1.257 килограмм горючи перекетлесе хӑварнӑ.

125. Трактористка **К. Е. Ефремова.** Вӑл ҫулталӑкри ӗҫ планне 123 процент тултарнӑ, 765 килограмм горючи перекетленӗ.

126. Тракторист **Н. Н. Николаев.** Вӑл ҫулталӑкри ӗҫ планне 143 процент тултарнӑ, 87 килограмм горючи перекетленӗ.

Шкул ӗҫӗнчи ҫӗнӗ ҫитӗнӳсемшӗн

Паян ҫӗршыври аслӑ шкулсемпе техникумсенче, туллимар вӑтам тата вӑтам шкулсенчи аслӑрах классенче вӗренӳ пуҫланать. Пирӗн ҫамрӑк патриотсем, Совет Союзӗнчи мӗнпур ӗҫсыннисем пекех, тӑван ҫӗршыв умне тухса тӑнӑ пысӑк хӑрушлӑха туйса илсе, хӑйсен ҫуллахи каникул вӑхӑтне производствӑра, колхозсемпе совхозсен уйхирӗсенче ӗҫлесе ирттерчӗҫ. Вӗсем хӑйсен ҫак хӗрӳллӗ ӗҫӗпе тӑван ҫӗршыва, фронта пысӑк пулӑшу пачӗҫ.

Республикӑри шкулсенче вӗренекенсенчен колхозсен уйхирӗсенче пӗтӗмпе 33.937 ҫын ӗҫлесе, икӗ миллион ҫурӑ патнелле ӗҫкунӗ тунӑ. Урӑхла каласан, кашни вӗренекен вӑтамран 73 ӗҫкунӗ ӗҫлесе илнӗ. Ҫакӑ вӑл тӑван ҫӗршывшӑн паянхи йывӑр вӑхӑтра калама ҫук пысӑк пулӑшу пулса тӑчӗ. Ҫакӑншӑн пирӗн тӑван ҫӗршыв, пирӗн халӑх, пирӗн ҫулпуҫ Сталин юлташ ҫамрӑк патриотсене тав тума кӑна пултараҫҫӗ.

Тӑван ҫӗршыва ҫакӑн пек пулӑшнипе пӗрлех, шкул ачисем хӗрӳ ӗҫре хӑйсене валли практикӑллӑ пысӑк хӑнӑху туянчӗҫ, хӑйсен шӑмшакӗсемпе вӑйхалне тӗреклетрӗҫ. Паянтан ӗнтӗ вӗсем ҫӗнӗ хастарлӑхпа вӗренӳ ӗҫне тытӑнаҫҫӗ.

Кӗҫӗнрех классенчи шкул ачисем пӗр уйӑх хушши вӗренчӗҫ. Ҫавӑнпа та шкулӑн малашнехи ӗҫӗсем ҫинчен каласа мар, пирӗн пӗр уйӑх хушшинчи ӗҫсене пӑхса тухса, хӑшпӗр выводсем тума, малтанхи опытсене пӗтӗҫтерме пулать. Вӑрҫӑ вӑхӑтӗнчи пысӑк йывӑрлӑхсене пӑхмасӑрах, республикӑри шкулсем вӗренӳ ҫулне организованно кӗтсе илчӗҫ. Чӑн та, малтанхи кунсенчех хӑшпӗр ҫӗрте ачасем шкула чылайӑн пыманни палӑрчӗ. 1-мӗшпе 4-мӗш классенче вӗренме тивӗҫлӗ 106.741 ачаран шкула малтанхи кунсенче 76.477 ача ҫӳренӗ пулнӑ. Каярахпа, учительсем ҫине тӑрса ӗҫленине пула, шкула ҫӳресси сисӗнмеллех лайӑхланчӗ. Сентябрӗн 15-мӗшӗ тӗлне 101.298 ача шкула ҫӳрекен пулчӗ. Анчах ҫакна ӑна ҫапах та ҫителӗклӗ тесе калама ҫук. Шкул ҫулне ҫитнӗ кашни ачана пирӗн вӗренӗве явӑҫтармалла. Ҫапла тума хушать пире пурне те хут вӗрентесси ҫинчен калакан Сталинла закон.

Ҫутӗҫ оргӑнӗсемпе шкул руководителӗсен, ялсовечӗсемпе колхоз правленийӗсен ачасене шкула тӗрӗс-тӗкӗл ҫӳреме пур условисене те туса памалла. Фронтовиксен тата фронт таврашӗнчи районсенчен куҫса килнӗ ҫынсен ачисемшӗн уйрӑмах ҫине тӑрса тӑрӑшмалла, вӗсене тумтирсемпе апат-ҫимӗҫ енчен, учебниксемпе вӗренӳре кирлӗ пособисем тӗлӗшӗнчен пулӑшмалла. Шкул ачисем ҫуллахи вӑхӑтра пӗтӗм вӑя хурса ӗҫлесе колхозсене пулӑшрӗҫ пулсан, колхозсен ҫак пулӑшу ҫинчен манмалла мар. Шкулсем валли вӑхӑтра вутӑ турттарса памалла, ачасем валли вӗри апат организацилемелле, шкул ҫурчӗсене хӗле тӗплӗн хатӗрлесе ҫитермелле.

Тӳрех калас пулать, шкулсем валли вутӑ хатӗрлес ӗҫ тӳсме ҫук япӑх тӑрать. Республикӑри шкулсем валли мӗн пурӗ 138.842 кубометр вутӑ касса хатӗрлесе турттармалла пулнӑ. Паянхи кун тӗлне 76.846 кубометр хатӗрленӗ, 26.025 кубометр турттарнӑ. Урӑхла каласан, паянхи кун тӗлне хӗл каҫиччен хутма кирлӗ вутӑран шкулсен картишӗнче пӗтӗмпе те 18 процент чухлӗ кӑна вутӑ пур. Ҫакӑ вӑл пӗтӗм вӗренӳ ӗҫне пысӑк хӑрушлӑх кӳрет. Шкулсем валли вутӑ турттарас ӗҫ Пӑрачкав, Советски, Етӗрне районӗсенче уйрӑмах япӑх. Сӑмахран, Пӑрачкав районӗнче пӗтӗмпе 5.164 кубометр турттармалла пулсан, 170 кубометр кӑна, Советски районра 3.477 кубометртан—400 кубометр, Етӗрне районӗнче—3.595 кубометртан—282 кубометр кӑна турттарнӑ. Ишлейри вӑтам шкула илсен, унта паян вутӑ пӗр сыпӑ та ҫук.

Ҫак хӑрушлӑха сирсе ямалла, ялсовечӗсемпе колхозсен шкулсем валли вутӑ хатӗрлес ӗҫе халех, ҫине тӑрсах тытӑнмалла.

Халиччен хи вӗренӳ ҫулӗсенчи пекех, шкулсен тӗп задачи—вӗренӳ пахалӑхне малалла ӳстерсе пырасси, вӗренекенсене наукӑсен тӗп никӗсӗсем енӗпе ҫирӗп пӗлӳ парассишӗн, шкулти дисциплинӑна малалла ҫирӗплетессишӗн, пирӗн ачасенчен ҫулӑмлӑ патриотсем пӑхса ҫитӗнтерессишӗн кӗрешесси пулса тӑрать.

Ҫак задачӑна пурнӑҫланӑ ҫӗрте учитель тӗп вырӑн йышӑнса тӑрать. Пирӗн кӑҫал шкул ӗҫне иртнӗ ҫул кӑна вӑтам шкулсенчен вӗренсе тухнӑ ҫамрӑксем нумай хутшӑнчӗҫ. Апла пулин те республикӑри шкулсенче учительсем чылаях ҫитмеҫҫӗ. Кунта пӗр учителе икӗ класра ӗҫлеттерме, предметниксене хӑйсен тӗп предмечӗсемсӗр пуҫне урӑх дисциплинӑсем хушса пама тивет. Ҫаксем пурте вӗсем учительсене ҫӗнӗрен йывӑрлӑхсем кӳреҫҫӗ. Ҫавӑнпа та ҫутӗҫ оргӑнӗсен, шкул руководителӗсен учительсене, уйрӑмах ҫамрӑккисене, тимлӗн пулӑшмалла. Ҫамрӑк учительсем валли тӑтӑшах семинарсем туса ирттермелле, методикӑллӑ кӑтартусем парса тӑмалла, вӗсене нумай ҫул хушши ӗҫленӗ ватӑ учительсен ӗҫ опычӗсемпе паллаштармалла. Ҫамрӑк учительсене опытлӑ учительсем ҫумне ҫирӗплетсен ӗҫ татах та лайӑхрах пулнӑ пулӗччӗ.

Пирӗн ҫамрӑк патриотсем ҫӗршывра, ҫавӑн пекех пӗтӗм тӗнчере пулса иртекен событисемпе яланах интересленнӗ. Халӗ, отечественнӑй аслӑ вӑрҫӑ вӑхӑтӗнче, ачасен политикӑллӑ интересӗ, вӗсен активлӑхӗ татах та ытларах ӳсрӗ. Вӗсене ку енӗпе вӑхӑтра та тимлӗн пулӑшмалла.

Шкулти уроксене, истори, географи, физика, математика, хими, литература тата ытти предметсене отечественнӑй вӑрҫӑ ыйтӑвӗсемпе ҫыхӑнтарса вӗрентни ачасене ҫав предметсене тӗплӗнрех алла илме, вӗсен вӗренӳри интересне, политикӑллӑ активлӑхне ҫӗклеме пулӑшать. Ҫакӑнпа пӗрлех, шкулти политикӑллӑ воспитани ӗҫне хальхи вӑхӑтра уйрӑмах лайӑх организацилемелле. Ачасене кулленхи событисемпе, отечественнӑй вӑрҫӑн эпизочӗсемпе, пирӗн Хӗрлӗ Ҫар воинӗсен геройла ӗҫӗсемпе вӑхӑтра паллаштарса пымалла. Совет ачисене пирӗн чаплӑ геройсен примерӗпе воспитани парса ҫитӗнтермелле.

Ҫак ӗҫре комсомолӑн хӑйӗн тивӗҫлӗ вырӑнне йышӑнмалла. Юлашки вӑхӑтра хӑшпӗр вырӑнти комсомол организацийӗсем шкулти ӗҫе вӑйсӑрлатни сисӗнет. Комсомол ҫамрӑк ӑрава политикӑллӑ воспитани парса ҫитӗнтерессишӗн парти умӗнче, тӑван ҫӗршыв умӗнче ответлӑ пулса тӑрать. Комсомол организацийӗсен шкул енӗпе ҫак ответлӑха туйса ӗҫлемелле те ӗнтӗ.

Пирӗн учительсемпе вӗренекенсем шкулсем умне тухса тӑнӑ пур йывӑрлӑхсене те ҫӗнтерме пултараҫҫӗ. Вӗсен ку енӗпе иртнӗ ҫулти опыт пур. Пӗтӗм вӗренӳпе воспитани ӗҫне паянхи аслӑ событисем ыйтнӑ пек йӗркелесе, шкулсем партипе правительство вӗсен умне лартнӑ задачӑсене чыслӑн пурнӑҫа кӗртӗҫ, тӑван ҫӗршывӑн ҫулӑмлӑ патриочӗсене сталинла тимлӗхпе ҫитӗнтерсе пырӗҫ.

Ҫӗнӗ обязательствӑсемпе ҫӗнӗ ҫитӗнӳсемшӗн

ИЕПРЕҪ. Районри колхозсем, Октябрь уявӗ умӗнхи ӑмӑртӑва хутшӑнса, хӑйсем ҫине ҫӗнӗ обязательствӑсем илчӗҫ. Аслӑ уява ӗҫре ҫӗнӗ ҫитӗнӳсемпе кӗтсе илессишӗн халӗ колхозниксем татах та хӗрӳллӗн ӗҫлеме пуҫларӗҫ. Кӗлӗмкассинчи «Красный фронтовик» колхоз сентябрӗн 27-мӗшӗ тӗлне государствӑна тырӑ памалли плана 108 процент, натуроплатӑна 73 процент тултарнӑ. Ҫавӑн пекех «Эконом», «Майӑн 1-мӗшӗ», «Заря» колхозсем те государствӑна тырӑ парса татнӑ. МТС машинисем ӗҫленӗшӗн натуроплатӑна 60—70 процент чухлӗ панӑ.

«Красный Октябрь» колхозра хатӗрлев пунктне тырӑ турттарас тӗлӗшпе транспорт бригади лайӑх ӗҫлет. Сентябрӗн 28-мӗшӗ тӗлне колхоз тырӑ памалли плана 100 процентпех, натуроплатӑна 92,9 процент пурнӑҫланӑ, Хӗрлӗ Ҫарӑн тырӑ фондне 42,4 центнер тырӑ парса, плана 112 процент тултарнӑ.

Д. МИХАЙЛОВ.

Совет Информаци Бюровӗнчен

Сентябрӗн 29-мӗшӗнчи каҫхи пӗлтерӳ

Сентябрӗн 29-мӗшӗнче пирӗн войскӑсем противникпа **Сталинград** районӗнче, **Моздок** районӗнче тата **Синявино** районӗнче ҫапӑҫнӑ. Ытти фронтсенче паллӑ улшӑнусемех пулман.

* * *

Сентябрӗн 28-мӗшӗнче пирӗн авиаци чаҫӗсем фронтӑн тӗрлӗ участокӗсенче нимӗҫсен 5 танкне тата войскӑсемпе грузсем турттарса пыракан 20 автомашинине пӗтерсе тӑкнӑ, полевой артиллерин 5 батарейине пусарса лартнӑ, боеприпассен 5 складне сирпӗнтерсе янӑ, противникӑн пехотине икӗ ротӑна ҫити сапаласа янӑ, пӗр пайне пӗтерсе тӑкнӑ.

* * *

Сталинград районӗнче хаяр ҫапӑҫусем пынӑ. Противникӑн танкӗсемпе пехотин пысӑк вӑйӗсем хулан ҫурҫӗр-хӗвеланӑҫ хӗрринче пирӗн позицисене авиаци пулӑшса пынипе кунӗпех атакӑланӑ. Гитлеровецсен пур атакисене те сирсе пӑрахнӑ, тӑшмана пысӑк ҫухатусем тӳстернӗ. Пирӗн чаҫсем хӑйсен малтанхи позицийӗсене хӑйсен аллинче тытса тӑраҫҫӗ. Пӗр кун хушшинче нимӗҫсен 29 танкне тата противникӑн салтакӗсемпе офицерӗсене 1.500 ҫынна ытла пӗтерсе тӑкнӑ. Пӗр высота патӗнчи ҫапӑҫура нимӗҫсем уйрӑмӑнах пысӑк ҫухатусем тӳснӗ. Ҫав высота патне пымалли вырӑнсенче тӑшманӑн салтакӗсемпе офицерӗсен 700 виллине ҫити выртса юлнӑ.

Совет летчикӗсем нимӗҫсен 3 самолетне, 8 танкне, 24 автомашинине, 3 бензоцистернине пӗтерсе тӑкнӑ тата боеприпассен складне сирпӗнтерсе янӑ.

Атӑл ҫинчи ҫар флотилийӗн карапӗсен артиллерийӗ нимӗҫсен пехотине икӗ батальона ҫити сапаласа янӑ, пӗр пайне пӗтерсе тӑкнӑ.

* * *

Сталинградран ҫурҫӗр-хӗвеланӑҫнерехре пирӗн войскӑсем активлӑн ҫапӑҫнӑ. Хӗрлӗ Ҫарӑн Н-ски соединенин чаҫӗсем противникпа хаяррӑн ҫапӑҫса пырса, виҫӗ кун хушшинче нимӗҫсен 49 танкне персе ҫӗмӗрнӗ е ҫунтарса янӑ, 18 орудине, 23 минометне, 41 пулеметне пӗтерсе тӑкнӑ. Ҫав виҫӗ кун хушшинче противникӑн салтакӗсемпе офицерӗсене 2.000 ҫынна ҫити пӗтерсе тӑкнӑ. Тыткӑна илнӗ ҫынсем каласа панӑ тӑрӑх, ҫав ҫапӑҫусенче противникӑн танковӑй дивизийӗпе мотодивизине ҫапса аркатнӑ. Ҫав чаҫсенчи ротӑсенче 15—25-шер салтак ҫеҫ тӑрса юлнӑ. Н-ски часть хӳтӗлекен тепӗр участокра нимӗҫсем контратака туса пӑхнӑ. Пирӗн боецсем нимӗҫсен 3 танкне ҫунтарса янӑ тата 8 танкне персе ҫӗмӗрнӗ, противникӑн пехотине икӗ ротӑна ҫити пӗтерсе тӑкнӑ.

* * *

Моздок районӗнче Н-ски соединени чаҫӗсем противникӑн темиҫе атакине сирсе янӑ. Ҫав ҫапӑҫусенче нимӗҫсен 11 танкне тата 350 гитлеровеца пӗтерсе тӑкнӑ. Тепӗр участокра тӑшманӑн йышлӑрах вӑйӗсем хӗсне пирӗн подразделенисен кӑштах каялла чакмалла пулнӑ. Вӑхӑт нумаях та иртмен, совет боецӗсем пулӑшу пырса ҫитсен контратака тунӑ та нимӗҫсене каялла хӑваласа янӑ, хӑйсен малтанхи позицийӗсене каялла тытса илнӗ.

* * *

Новороссийскран кӑнтӑр-хӗвелтухӑҫнерехре пирӗн позицие румынсен горнострелковӑй дивизийӗ атакӑланӑ пулнӑ. Тинӗс пехотин Гордеев юлташ ертсе пыракан чаҫӗ румынсене пырса ҫапса каялла хӑваласа янӑ. Ҫав ҫапӑҫура Кузьмин юлташӑн подразделенийӗ противникӑн 12-мӗш горнострелковӑй батальонне ҫапса аркатнӑ. Румынсен 300 салтакӗпе офицерне пӗтерсе тӑкнӑ. Шитов юлташӑн подразделенийӗнчи боецсем гитлеровецсене икӗ ротӑна ҫити пӗтерсе тӑкнӑ тата 11 пулеметпа 3 миномет тытса илнӗ.

* * *

Ленинград фронтӗнче пирӗн уйрӑм подразделенисем тата снайперсемпе разведчиксем икӗ кун хушшинче тӑшманӑн 200 салтакӗпе офицерне ҫити вӗлерсе пӗтернӗ. Нимӗҫсен 4 танкне, темиҫе станковӑй пулеметне, 5 автомашинине тата ҫар грузӗсем тиенӗ 4 лавне пӗтерсе тӑкнӑ. Ефрейтор Ф. Ивaваев юлташ тата краснофлотец Боющук юлташ минометпа персе противникӑн минӑсемпе артиллери снарячӗсем усракан складне сирпӗнтерсе янӑ.

* * *

Волхов фрончӗн пӗр участокӗнче нимӗҫсен 28-мӗш пехотнӑй дивизийӗнчи 83-мӗш полкӑн 1-мӗш ротинче санитар пулса ӗҫленӗ Гейнц Гюнтер Олиас ефрейтора тыткӑна илнӗ. Ҫав тыткӑна лекнӗ ҫын—философи докторӗ—вӑрҫӑччен Краковри университетӑн искусство историйӗн секцийӗнче ассистент пулса ӗҫленӗ. Гейнц Олиас ҫакӑн ҫинчен пӗлтернӗ: Керчь патӗнче пирӗн дивизи хӑйӗн личнӑй составӗн 50 процентне ытла ҫухатрӗ. Кӑшт каярахпа пирӗн дивизи Балаклава патӗнчи ҫапӑҫусенче пулчӗ. Унта вырӑссем пирӗн 83-мӗш полка ҫапса салатрӗҫ. Вӑл полкри ротӑсенче 10—15-шер салтак ҫеҫ тӑрса юлчӗҫ. Дивизи валли ҫӗнӗрен ҫынсем хушса панӑ хыҫҫӑн ӑна Волхов фронтне куҫарчӗҫ. Салтаксен шухӑш-кӑмӑлӗсем япӑх. Ҫывхарса килекен хӗл ҫинчен вӗсем питӗ те хӑраса шухӑшлаҫҫӗ. Российӑна ҫӗнтерме май ҫук, теҫҫӗ салтаксенчен нумайӗшӗсем. Вырӑссен ҫарӗ вӑйлӑ, техники питӗ нумай тата вырӑссем вӗҫӗ-хӗррисӗр пысӑк вырӑн йышӑнса тӑраҫҫӗ, тесе калаҫҫӗ пире салтаксем».

Тыткӑна лекнӗ ҫын юлашкинчен ҫакӑн ҫинчен, каласа панӑ: «Украинӑра пирӗн ҫар сӗмӗрсе пӗтернӗ тата юхӑнтарнӑ хуласене [illegible] пулать. Ҫӗр талкӑшӗсем пысӑк, анчах та вӗсем ҫинче никам та ӗҫлемест. Оккупациленӗ районсенчи халӑх выҫлӑхпа асапланса пурӑнать. Николаевра, Херсонра, Первомайскра, Константиновкӑра тата ытти хуласенче ҫар влаҫӗсем мирлӗ совет гражданӗсене 10-шар пин ҫынна персе вӗлернӗ. Николаевра партизансем пирӗн аэродрома тапӑннӑ хыҫҫӑн нимӗҫсем хулари ним айӑпсӑр ҫынсене 300 ҫынна ытла персе вӗлерчӗҫ. Хулари урамсенчен пӗринче 12 ҫын ҫакӑнса тӑнине (вӗсенчен 3-шӗ хӗрарӑмччӗ) эпӗ хам куҫпах куртӑм».

Сентябрӗн 30-мӗшӗнчи ирхи пӗлтерӳ

Сентябрӗн 30-мӗшӗ ыран тенӗ чух ҫӗрле пирӗн войскӑсем противникпа **Сталинград** районӗнче, **Моздок** районӗнче тата **Синявино** районӗнче ҫапӑҫнӑ. Ытти фронтсенче паллӑ улшӑнусемех пулман.

* * *

Сталинград районӗнче пирӗн войскӑсем противникӑн танкӗсемпе тата пехотипе хаяррӑн ҫапӑҫнӑ. Пирӗн артиллеристсем 71 автомашинӑна, артиллерин 2 батарейине тата нимӗҫсен темиҫе танкне пӗтерсе тӑкнӑ. Никитин юлташ командир пулса тӑракан гвардейски миномет чаҫӗ 800 гитлеровеца пӗтерсе тӑкнӑ.

* * *

Сталинградран ҫурҫӗр-хӗвеланӑҫнерехре вӑйлӑ ҫапӑҫусем пынӑ. Н-ски чаҫӑн артиллерисчӗсем 600 гитлеровеца ҫити вӗлернӗ, 16 танк ҫӗмӗрнӗ е ҫунтарса янӑ, 5 оруди, 35 пулемет тата ҫар грузӗсем тиенӗ 27 автомашинӑна пӗтерсе тӑкнӑ. Гвардейски чаҫӑн участокӗнче нимӗҫсен пехоти танксем пулӑшса пынипе пирӗн позицисене атакӑланӑ. Противникӑн танкӗсем ҫывӑха пырса ҫитсен, пирӗн бронебойщиксем вӗсем ҫине пеме тытӑннӑ та нимӗҫсен 4 танкне ҫунтарса янӑ. Нимӗҫсен пехотине пӗр ротӑна ҫити вӗлерсе пӗтернӗ.

* * *

Моздок районӗнче пирӗн чаҫсем противникӑн атакисене сире-сире янӑ. Н-ски чаҫӑн боецӗсем тӑшманӑн 4 танкне тата боеприпассем тиенӗ 9 автомашинине пӗтерсе тӑкнӑ, нимӗҫсен пӗр батальонне ҫапса аркатнӑ. Артиллерипе тата минометсемпе персе противникӑн танкӗсемпе мотопехотин пӗр ҫӗре пухӑнса тӑнӑ пысӑк ушкӑнне сапаласа янӑ.

* * *

Новороссийскран кӑнтӑр-хӗвелтухӑҫнерехре тинӗс пехотин чаҫӗсем, противникпа вӑйлӑн ҫапӑҫса, пӗр высотана йышӑнса илнӗ. Противникӑн 7 дзотне, 45 блиндажне тата 4 командӑй пунктне ҫӗмӗрнӗ. Нимӗҫсемпе румынсен 500 салтакӗпе офицерне ҫити пӗтерсе тӑкнӑ.

Хура тинӗс ҫинчи авиаци икӗ эрне хушшинче противникӑн 5 тральщикне, 6 баржине, хӑй тӗллӗн ишсе ҫӳрекен 4 понтонне тата 7 торпеднӑй катерне путарнӑ.

* * *

Архипенко юлташ командир пулса тӑракан авиачаҫӑн летчикӗсем (Карели фрончӗ) тӑшманӑн темиҫе аэродромне тапӑннӑ. Зенитнӑй артиллери вӑйлӑн персе тӑнӑ пулин те, пӑрахнӑ бомбӑсем пурте тӗл ӳкнӗ. Аэродромсем ҫинче 18 тӗлте пушар тухнӑ тата икӗ хутчен вӑйлӑ взрыв пулнӑ. Мурманск районӗнче пирӗн летчиксем сывлӑшри ҫапӑҫура нимӗҫсен 3 самолетне персе ӳкернӗ.

* * *

Брянскпа Орел хушшинчи чугунҫул участокӗнче партизансем нимӗҫсен чӗрӗ вӑйпа хӗҫпӑшал турттарса пыракан икӗ поездне ӳпӗнтерсе янӑ. Икӗ паровоз тата вагонсемпе платформӑсем нумай ҫӗмӗрӗлнӗ.

* * *

Нимӗҫсен 9 армейски корпусӗнчи 307-мӗш чугунҫул ротинчен тыткӑна лекнӗ Бруно Рехенберг ҫапла каласа панӑ: «Манӑн ротӑра ватӑла пуҫланӑ салтаксем питӗ нумай. Сӑмахран, эпӗ 44 ҫулта, анчах манран аслӑраххисем те пур. Нумаях пулмасть пире малти позицисене ячӗҫ те ҫапӑҫӑва хӑваласа кӗртрӗҫ. Вырӑссем пирӗн ротӑна ҫавӑрса илчӗҫ те 60 ҫынна ытла вӗлерсе пӗтерчӗҫ. Салтаксен пысӑк мар ушкӑнӗ тыткӑна лекрӗ, ыттисем тарса саланчӗҫ.

Ҫак ҫулхи апрельре эпӗ Гамбург ҫывӑхӗнчи Квикборн ялӗнче пултӑм. Унта мана ҫапла каларӗҫ: 1942 ҫулхи январӗн 1-мӗш кунӗччен Хӗвелтухӑҫ фронтӗнче ҫав ялти 45 ҫынна вӗлернӗ. Пӗтӗм тӗнчери пӗрремӗш вӑрҫӑн тӑватӑ ҫулӗ хушшинче Квикборнран фронта кайнӑ ҫынсем 30 ҫын ҫеҫ вилнӗччӗ».

* * *

Сентябрӗн пуҫламӗш кунӗсенче Кировоградра такам виҫӗ нимӗҫ салтакне вӗлернӗ. Гестаповецсем темиҫе кун хушши хулана ҫавӑра-ҫавӑра илсе ухтарса ҫӳренӗ, анчах вӗлерекенсене тупайман. Вара нимӗҫ бандичӗсем мирлӗ халӑха асаплантарма тытӑннӑ. Сентябрӗн 11-мӗшӗнче гестаповецсем 100 совет гражданне ытла арестленӗ те персе вӗлернӗ.

* * *

Францире Жизор ҫывӑхӗнче ирӗклӗ стрелоксен отрячӗ нимӗҫсен ирӗксӗр анса ларнӑ самолетне тытса илнӗ. Франци патриочӗсем нимӗҫ летчикӗсене вӗлерсе пӗтернӗ, вӗсен хӗҫпӑшалӗсене тытса илнӗ, бомбардировщикне ҫунтарса янӑ.

Отечественнӑй аслӑ вӑрҫӑ фрончӗсенче

Сталинградшӑн пыракан хаяр ҫапӑҫусем

ДЕЙСТВУЮЩИ АРМИ, сентябрӗн 29-мӗшӗ. **(ТАСС спецкорӗ).** Пехотӑпа танксен ҫӗнӗ дивизийӗсене илсе пырса, нимӗҫсем Сталинград ҫине ҫӗнӗ вӑйпа наступлени пуҫласа янӑ. Ӗнер иртен пуҫласа тӗттӗм пуличченех хаяр ҫапӑҫусем пынӑ. Тӑшманӑн авиацийӗ пирӗн боевой ретсем ҫине тӑтӑшах бомбӑсем пӑрахса тӑнӑ. Противникӑн артиллерийӗ пӗр минутӑлӑха та пеме чарӑнса тӑман. Нимӗҫсен ҫапӑҫӑва тин ҫеҫ кӗртсе янӑ пехотнӑй дивизийӗсем вуншар танк пулӑшса пынипе пирӗн оборонӑн сылтӑм флангӗ ҫине наступлени тума тытӑннӑ. Совет боецӗсем тӑшман хӗснине кунӗпех хастарлӑн сирсе тӑнӑ Артиллеристсем, бронебойщиксем, пехотинецсем, ҫунакан шӗвек тултарнӑ бутылкӑсемпе хӗҫпӑшалланӑскерсем тӑшманӑн нумай машинине вут тӗртсе ҫунтарнӑ. Ҫапӑҫу хирӗ гитлерла салтаксемпе офицерсен ҫӗршер виллипе витӗнсе юлнӑ. Анчах ҫапах та каҫпала тӑшманӑн танкӗсен пӗр ушкӑнӗ рабочи поселока кӗрсе кайма пултарнӑ.

Тепӗр участокра нимӗҫсем пӗр паха высотана пӗр чарӑнмасӑр атакӑланӑ. Гвардеецсем тӑшманӑн пур атакисене те сирсе янӑ. Высота пирӗн аллӑра юлнӑ. Совет воинӗсем тӑшман хӗснине ҫирӗппӗн тӑрса тытса чараҫҫӗ. Унта урамри ҫапӑҫусем уйрӑмах хаяр пулса пынӑ. Кашни ҫуртшӑн, кашни пусмашӑн штык вӗҫҫӗн тӑрса ҫапӑҫнӑ. Сталинграда мухтавлӑн хӳтӗлекенсем пӗр ӗнер кӑна фашистсен 50 танкне яхӑн пӗтерсе тӑкнӑ тата нимӗҫсен пехотине икӗ полка яхӑн вӗлерсе пӗтернӗ.

Н-ски чаҫӑн минометчикӗсем хула хӗррине кӗрсе кайнӑ ҫӗршер, пиншер гитлеровеца вӗлерсе пӗтернӗ. Зуев, Никитин тата Кривцов боецсенчен тӑракан миномет расчечӗ гитлеровецсен пысӑк колоннине пӗр ҫын юлмиччен пӗтерсе тӑкнӑ. Миномет наводчикӗ Макухин пӗрремӗш хут персе ярсах пӗр автомашинӑна тата гитлеровецсен пӗр ушкӑнне пӗтерсе тӑкнӑ.

Моздок районӗнчи ҫапӑҫусем

ДЕЙСТВУЮЩИ АРМИ, сентябрӗн 25-мӗшӗ. **(ТАСС спецкорӗ).** Моздок районӗнче хаяр ҫапӑҫусем пыраҫҫӗ. Тӑшман пирӗн оборонӑна татма хӑтланнисем пӑчланса лараҫҫӗ. Совет воинӗсем хӑйсем йышӑнса тӑракан рубежсене хӑйсен аллинче тытса тӑраҫҫӗ кӑна мар, вӗсем тата нимӗҫсене халран ярса пырса, контратакӑсем тӑваҫҫӗ, нимӗҫсене чӗрӗ вӑйпа техника тӗлӗшӗнчен пысӑк ҫухатусем тӳстереҫҫӗ.

Фронтӑн пӗр ансӑр участокӗнче гитлеровецсем 35 танк хӳтӗлесе пынипе атака тунӑ. Совет воинӗсем хӑраса ӳкмен, пӗр утӑм та каялла чакман. Ҫав ҫапӑҫура пирӗн бронебойщиксем, артиллеристсемпе тата минометчиксемпе ҫыхӑнса кӗрешсе, 20 танка ытла персе ҫӗмӗрнӗ е ҫунтарса янӑ. Тӑшманӑн ытти машинисем вара каялла ҫавӑрӑнса кайнӑ. Нимӗҫсен танксенчен татӑлса юлнӑ пехоти, пирӗн боецсем хирӗҫ пырса ҫапнине тӳсеймесӗр, хӑйӗн малтанхи позицийӗсем патне чакнӑ. Ҫапӑҫу хирӗнче нумай виллӗ выртса юлнӑ.

Тепӗр участокра пирӗн чаҫсем наступлени тунӑ. Кӑнтӑрла сулӑнсан вӗсем нимӗҫсем боеприпассем турттаракан ҫул патне пырса тухнӑ. Противник васкаса ытти участоксенчен танксем илсе пынӑ та пирӗн пехотӑна хирӗҫ контратака тунӑ. Танксем ушкӑнӑн-ушкӑнӑн пынӑ. Пӗр ушкӑнра 41 танк, тепринче 30 ытла, виҫҫӗмӗшӗнче 4 танк пулнӑ.

Противник тӗттӗм пуличчен пирӗн боевой ретсене ҫапса ҫӗмӗрсе пирӗн пехотӑна каялла хӑваласа яма тата ҫӗрле ҫав тытса илнӗ рубежсенче ҫирӗпленсе ларма шутланӑ. Анчах та совет пехотин командирӗсем хӑйсене кӗтмен ҫӗртен тапӑнма паман. Вӗсем чаваха хӑйсен вӑйӗсене урӑхла вырӑнаҫтарса тӑратнӑ, хурҫӑ машинӑсене хирӗҫ мала противотанковӑй пӑшалсемпе тупӑсем кӑларса тӑратнӑ, вӗсем пулеметсемпе тата минометсемпе вӑйлӑн персе тӑрса, танксем ҫине ларса пыракан автоматчиксене вӗсем аякра чухнех пӗтӗмпе тенӗ пекех пӗтерсе тӑкнӑ.

Нимӗҫ танкӗсем пирӗн пехота патне пырса ҫитсен, пирӗн стрелоксем, окопсем чавса выртма ӗлкӗреймен пулин те, вырӑнтан хускалман. Ҫӳллӗ курӑкпа тата пысӑках мар тӗмесемпе усӑ курса, вӗсем ҫав танксене ҫывӑхах янӑ та вӗсем ҫине противотанковӑй пӑшалсемпе тата тупӑсемпе пенӗ, гранатӑсемпе бутылкӑсем ывӑтнӑ. Тӗрлӗ тӗлте вут тивнӗ машинӑсем ҫуннӑ. Тӑшманӑн хӑшпӗр экипажӗсем танксенчен тухса пирӗн хӗссе пыракан пехотинецсемпе штык вӗҫҫӗн тӑрса ҫапӑҫма хӑтланнӑ. Анчах та вӗсене совет воинӗсем ҫийӗнчех пере-пере вӗлернӗ. Танксем каялла кайнӑ, унтан каллех ҫавӑрӑнса килнӗ, темиҫе хутчен атакӑланӑ, анчах ӗҫ кӑлараймаи.

Каҫ пулнӑ. Тӗтӗмленме пуҫланӑ. Ӗҫӗ ӑнманнипе танксем каялла кайнӑ. Ҫапӑҫу хирӗнче тӑшманӑн ванса хуҫкаланса пӗтнӗ тата ҫунса кайнӑ нумай машини выртса юлнӑ, нимӗҫ автоматчикӗсен вуншар виллисем тата пулеметсемпе автоматсем сапаланса выртнӑ. Пирӗн пехотинецсем, противникӑн позицийӗсем умӗнчех окопсем чавса, кӑнтӑрла тунӑ ҫитӗнӳсене ҫийӗнчех ҫирӗплетсе хума тытӑннӑ. Ҫӗрӗн пӗр метрне те тӑшмана паман, пирӗн ҫухатусем пысӑк пулман. Ҫав ҫапӑҫу вӑл ҫакна тепӗр хут кӑтартса парать: ҫирӗп тӑракан пехотӑна противникӑн танкӗсем нимӗн те тӑваймаҫҫӗ ҫеҫ мар, ҫавӑн пек пехота вӗсемшӗн питӗ хӑрушӑ противник пулса тӑрать.

Геройсем-пехотинецсем хӑйсем йышӑнса илнӗ рубежсене хӑйсен аллинче тытса тӑраҫҫӗ.

А. МАЛИБАШЕВ,
Г. ОШАРОВСКИЙ.

Уяв парнисем хатӗрлеҫҫӗ

КОМСОМОЛЬСКОЕ. **(Телефонпа).** Районри колхозсенче Шупашкарти Ленин ячӗпе тӑракан фабрикӑн рабочийӗсемпе работницисем Октябрь уявӗ ячӗпе Хӗрлӗ Ҫар боецӗсем патне парнесем яма чӗнсе каланине сӳтсе-яваҫҫӗ.

Чылай колхозсем парне туса яма какай типӗтеҫҫӗ, колбаса тума заказсем параҫҫӗ. «Искра» колхоз 50 килограмм, «Кзыл Сабанча» колхоз 30 килограмм какайран колбаса пӗҫерме заказсем панӑ.

Нӗркеҫри колхоз 70 килограмм, «Светлая жизнь» колхоз 60 килограмм сысна какайӗнчен ветчина хатӗрлеме заказ панӑ.

Шурӑ ҫӑнӑхран сухарисем тума «Дубровка» колхоз 4 центнер, «Янга Турмыш» колхоз—3 центнер тулӑ уйӑрнӑ, вӗсене ҫӑнӑхпа улӑштарма кайнӑ.

«Двигатель революции» колхоз Хӗрлӗ Ҫар боецӗсем патне ярса пама 1,5 тонна ҫӗрулми хатӗрленӗ.

В. АВАККУМОВ,
ВКП(б) райкомӗн секретарӗ·

Хӗрлӗ Ҫар боецӗсем валли—ӑшӑ тумтирсем

ОКТЯБРЬСКОЕ. Караньялӗнчи **«Труд»** промысла артелӗн членӗсем Хӗрлӗ Ҫар валли ӑшӑ тумтирсем пухас ӗҫе активлӑн хутшӑнаҫҫӗ. Сентябрь уйӑхӗнче кӑна вӗсем совет воинӗсем валли 26 мӑшӑр ҫӑм носки, 9 мӑшӑр алса, 11 мулаххай, 24 килограмм ҫӑм тата 103 тир пачӗҫ. Тирсене артелӗн тир-сӑран заводӗнче тӑваҫҫӗ, вӗсенчен артельри ҫӗвӗҫсем укҫа илмесӗрех кӗрӗк пиншаксем ҫӗлесе хатӗрлеме пулчӗҫ.

Артель коллективӗ Чӑваш республикинчи промысла артелӗсен членӗсене пурне те ӑшӑ тумтирсем пухас ӗҫе хутшӑнма чӗнет.

И. МОКЕЕВ.

Выльăх витисене хĕле лайăх хатĕрлемелле

ВĂРМАР. (Телефонпа). Кив Вăрмарти «Большевик» колхозăн фермисенче хĕрӳ ĕç пырать. Платниксемпе пĕрле фермăсенчи колхозниксем те иртен пуçласа каçченех витесене юсанă çĕрте ĕçлеççĕ. Колхоз ĕне витине юсанă, 250 сурăх вырнаçтармалăх çĕнĕ вите туса лартнă, сысна витине валли кухня тунă, чăхсен фермине аслăлатнă. Выльăхсем валли уйăрнă тымар-çимĕçсене тытса усрама çуртсем тунă. Пур витесене те тасатнă, дезинфекциленĕ.

Колхоз правленийĕпе ялсовет исполкомĕ выльăх-чĕрлĕх ĕрчетессишĕн тимлĕн ĕçлеççĕ. Колхоз партипе правительствăн «Çамрăк выльăхсене пăхса усрамалли тата выльăх-чĕрлĕхĕн хисепне ӳстермелли мерăсем çинчен» йышăннă постановленине тĕплĕн пурнăçласа пырать. Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли плана вăл пур йышши выльăхсем енĕпе те иртерсе пурнăçланă. Колхозăн фермисенче ĕне-пăрусен хисепĕ планпа пăхнинчен вунă пуç, сыснасен хисепĕ 20 пуç, сурăхсен хисепĕ 34 пуç ытларах. Контрактаци тумалли плана колхоз иртерсе пурнăçланă. Сентябрĕн 25-мĕшĕ тĕлне контрактациленĕ 36 пăрăва, 99 путеке фермăсене илсе пынă. Выльăхсене лайăх та сĕтеклĕ апатпа усрама колхоз 132 тонна силос хывнă, планпа пăхнинчен иртерсе татах 70 тонна утă хатĕрленĕ.

Выльăх-чĕрлĕхе ăшă та çутă витесенче пăхса усрассишĕн, вĕсен продуктивноçне татах та ытларах ӳстерессишĕн Тикашри «Большевик» колхоз та тăрăшса ĕçлет. Колхоз (председателĕ Семенов) выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли 1942 çулти плана пур выльăхсем енĕпе те пурнăçланă. Витесене юсанă, ăшăтнă, халĕ тасатса дезинфекцилес ĕçсем пыраççĕ. Выльăх-чĕрлĕхĕн апатçимĕç базине кăçал колхоз çирĕп хывса хăварчĕ. 130 тонна силос хывнă, 154 тонна утă хатĕрлес вырăнне 255 тонна хатĕрленĕ. Ăна фермăсен руководителĕ актпа çирĕплетсе йышăннă.

Анчах та выльăхсене хĕл каçарма ăшă витесем туса парас ĕç районри хăшпĕр колхозсенче çителĕксĕр пулса пырать-ха. Районри 55 колхозран выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли плана 17 колхоз çеç пурнăçланă. Район сыснасем ĕрчетмелли плана çеç ăнăçлăн тултарнă. Уйрăмах çамрăк выльăхсене пăхса ӳстерес тата ама выльăхсене ĕрчетес ĕç çителĕксĕр пулса пырать. Контрактациленĕ 1.350 пăруран 867 пăрăва кăна, 811 путекрен 624-шне çеç колхозсен фермисене илсе пынă. Çак ĕç юлашки кунсенче вăйсăрланса пыни сисĕнет. Анаткасри «Парижская Коммуна» колхозăн план тăрăх 17 пуç ĕне çитмест. Çавăн пекех Чулкасри «Свобода» колхоз та сыснасем ĕрчетмелли плана çеç пурнăçланă. Çапах та ку колхозсем контрактациленĕ выльăхсене фермăсене пухассишĕн тăрăшмаççĕ.

«Трактор» колхоз сурăхсем ĕрчетмелли плана 44 процент, ĕнесем енĕпе 31 процент çеç пурнăçланă. Контрактациленĕ пăрусемпе путексене пĕр пуç та фермăна илсе пыман. «Партин 15-мĕш съезчĕ» колхоз ĕне витин тăррине халĕ те витмен. Колхозăн обществăллă выльăх-чĕрлĕхне ĕрчетес ĕçе кунта пачах та хакламаççĕ. Фермăсенче пурăнмалли выльăхсене уйрăм колхозниксен хуçалăхĕсенче усраççĕ. Çакăн пек практикăна тĕпренех пăрахăçламалла. Колхозăн обществăллă выльăх-чĕрлĕхне хĕл каçарма ăшă та çутă витесем, çителĕклĕ таран тутă апат хатĕрлемелле.

П. НИКОЛАЕВ.

Малти вырăна тухассишĕн

КУКЕÇ. Питукассинчи «Память Ленина» колхоз председательне Демьянов юлташа Шăмăш ялсовет исполкомĕн председательне лартсан, колхозниксем ун вырăнне колхоз председателĕ пулса ĕçлеме Петр Егорович Егорова суйласа лартрĕç. Егоров юлташ малтанах ĕçе йышăнма хăраса тăчĕ. Сахал вĕреннĕ, çитменнине тата колхозри ĕç вăйĕ те ĕлĕкхи мар— вăйпитти çынсем тăван çĕршывшăн çапăçма кайнă; ертсе пырас ĕç опычĕ те манăн пысăк мар—пĕтĕмпе те пĕр çул çеç бригадирта ĕçленĕ, тенĕ вăл. Унтан çапах та килĕшнĕ вара.

Питукасси колхозĕ нихăçан та кайри вырăнта тăман. Питукассем ĕçлеме ӳркенмеççĕ. Çавăнпа та вĕсене: «Юлса пыратăр» тесе каламаççĕ. Юлса пыракансемпе калаçнă чухне: «Питукассем пек ĕçлĕр», теççĕ.

Кăçал колхозниксем ытти çулхисенчен те хастартарах ĕçлерĕç. Колхоз председателĕ Егоров пысăк хастарлăх кăтартрĕ. Егоров тата çамрăк бригадирсем пур ĕçсене те вăхăтра йĕркелесе, ертсе пыраççĕ. Кашни ĕçе виçеççĕ, планлаççĕ. Ыран ăçта мĕн чухлĕ ĕç вăйĕ кирлине палăртса хураççĕ, кашни кунăн ĕçне итоглаççĕ. Вĕсем ялан колхозниксем патĕнче. Мĕн çитмест, мĕнле чăрмав пур—çавăнтах вĕсене пĕтерме пулăшаççĕ.

Çапла ĕçленипе колхоз тырпулсене кĕске вăхăтра пухса кĕртсе капана хыврĕ. Халĕ хĕрсех авăн çапаççĕ. Октябрĕн 1-мĕшĕ тĕлне график тăрăх авăн çапса пĕтет. Государствăна чи малтан çапнă тырра парса, плана пĕтĕмĕшпех тултарнă. 15,7 гектар çинчи çĕрулмине 3 кунта кăларса пĕтернĕ. Государствăна колхозшăн та, колхозниксемшĕн те çĕрулми парса татнă. Вăрлăх фондне çителĕклĕ таранах уйăрса, хранилищĕне хунă.

Кăçал тырă тухăçлă пулчĕ. Пăрса гектартан 155 пăт, урпа 139 пăт, ыраш—уйрăм участоксенчен 90 пăт таран тухать. Ĕçкунĕ пуçне пĕрчĕллĕ тырăсем 3 килограмм, çĕрулми 4 килограмм, купăста 1 килограмм салатма шутлаççĕ.

Колхоз выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес тĕлĕшпе те начар мар ĕçлет. Пур выльăхсем те фермăсенче планпа пăхнинчен ытларах. Вĕсем валли ăшă витесем тата çителĕклĕ таран апат-çимĕç хатĕрленĕ. Кăçал выльăх-чĕрлĕх витисем тăвас тĕлĕшпе ятарласа тунă плотниксен бригади лайăх ĕçлерĕ. Вĕсем 45 пуç вырнаçмалăх сурăх вити, 150 пуç вырнаçмалăх чăх вити, 20 пуç вырнаçмалăх сысна вити, çав бригадах 25 тонна вырнаçмалăх овощехранилище тунă. Выльăх-чĕрлĕх валли 32 гектар улăх ути, 5 гектар клевер çулса пуçтарнă, 45 тонна çилос хывнă.

Колхоз фермăран пысăк тупăш илет. Государствăна аш-какай, сĕт-çу 1942 çулшăн парса татнă. Пасара тухса темиçе пин тенкĕлĕх çу сутнă, ĕçкунĕ тăрăх та валеçме шутлаççĕ.

Колхоз председателĕ Егоров юлташ:

— Октябрь пуçламĕш тĕлне эпир ял хуçалăхĕн пур ĕçĕсене те пуçтарса çитеретпĕр, выльăх-чĕрлĕхе хĕл каçарма хатĕрленетпĕр,—тет.

Питукасси колхозникĕсем районра малти вырăна тухассишĕн кĕрешеççĕ. Вĕсен ĕçĕнче дисциплина çирĕп. Колхозниксем ĕçре хăйсене Хĕрлĕ Çар воинĕсем пек шутласа ĕçлеççĕ.

Тр. ЛОГИНОВ.

Октябрь уявĕ умĕнхи социализмлă ăмăрту

ĂМĂРТĂВĂН МАЛТАНХИ РЕЗУЛЬТАЧĔ

Çап-çутă та таса цехра ĕç пуçланман-ха. Рабочисенчен чылайăшĕсем кăтарту хăмисем патĕнче тăраççĕ. Вĕсем ĕнерхи ĕçĕн результачĕсене пăхаççĕ.

— Да! Вăт-тăк ĕçленĕ, виçĕ норма ытла вĕт,—тет ватă рабочи хăй çумĕнче тăракан çамрăк хĕрачана.

Хĕрача пĕр вăхăт хушши ним шарламасăр тăрать. Вăл кăтарту хăми çине пăхнă. Унтан йăл кулса, ватă рабочи еннелле çаврăнать.

— Хăшне калатăр çав эсир?—ыйтать вăл унран.

— Акă çак Сергеевăна. Вăл вĕт виçĕ çын тумалли ĕçе тунă ĕнер,—тет ватă рабочи.—Пурте эпир çавăн пек ĕçлесен, çĕршыва планран иртерсе сахал мар продукци памалла.

— Кашнин ĕç кунĕпе туллин усă курса, вăя хурса ĕçлемелле. Эпĕ акă ĕнер пĕр минута та ахаль тăман. Ман юлташ та пĕр простой тумасăр ĕçлерĕ. Çавăншăн ĕнтĕ пирĕн результатсем начар мар,— ответлерĕ хĕрача.

Рабочи каллех хĕрача çине пăхса илчĕ те:

— Так, эсир Сергеева мар-и çав?—тесе ыйтрĕ.

Вĕсем патне тата темиçе хĕр пырса тăчĕç, пурте Сергеевăн аллине тытса чăмăртарĕç.

— Ыран татах та ытларах çитĕнӳ тума сывлăх сунатпăр,—терĕç вĕсем.

Кăтарту хăми çине Сергеевăн юлташĕсене Федоровăпа Ивановăна та, Климкинăна та кĕртнĕ. Вĕсен хушамачĕсем тĕлĕнче те 220—270 цифрăсем тăраççĕ. Вĕсем те двухсотницăсем.

Смена ĕçе тытăнать. Паçăр анчах кăтарту хăмисем патĕнче тăракансем хĕрӳллĕ ĕçе кӳлĕнеççĕ. Халь акă ĕç татах та хăвăрттăн пынă пек туйăнать. Паллă ĕнтĕ, паян кашниех ĕнерхинчен лайăхрах, юлташĕсенчен ытларах çитĕнӳ тума ĕмĕтленет.

Цехра мастер техник С. Васильев васкавлăн утса çӳрет. Вăл çамрăк рабочисем патне пырса вĕсен ĕçĕсемпе паллашать, кирлĕ пулсан пулăшу парать.

— Юлташсем, паян пирĕн татах та тухăçлăрах ĕçлемелле. Астăвăр, хамăр çумрисем пирĕнпе ăмăртаççĕ,—тет мастер çамрăк рабочисене.

Кăнтăрла, апата тухсан, рабочисем çур ĕçкунĕ хушшинче мĕнле ĕçлени çинчен калаçаççĕ. Нормăна кам мĕн чухлĕ тултарни халех паллă. Ĕнер икшер норма туса ĕçленĕ Григорьевпа Бардасов паян çур ĕçкунĕ хушшинчех сменăри нормăна 110 процент тултарчĕç, комсомолкăсем Оля Ивановăпа Климкина— 150-шар процент турĕç.

Сергеевăпа Федорова пĕр-пĕринпе ăмăртаççĕ. Сергеева, ĕнер 3 норма тунăскер, паян та çав виçерен чакмасть, вăл малтанхи 3 сехет хушшинчех пĕр кунхи задание пурнăçларĕ.

Комбинатри çак цехăн коллективĕ, Октябрь уявĕ умĕнхи социализмлă ăмăртăва хутшăнса, пĕр йышши продукци туса кăларассине 40 процент ӳстерме обязательство илнĕ. Çак цифрăна кашни рабочипе работница лайăх пĕлсе тăрать. Ăна пурнăçлас тесен, вăя шеллемелле мар; паян ĕнерхинчен лайăхрах ĕçлерĕн пулсан, ыран татах та лайăх ĕçлемелле.

Тĕрĕс тăваççĕ рабочисем: вĕсем тунă çитĕнӳсене çирĕплетсех пыраççĕ. Вăл кашни рабочипе работницăн ĕçĕнчех уççăн курăнать. Цех коллективĕ Октябрь уявĕ умĕнхи ăмăртăва хутшăннă хыççăн ик-виçĕ хут лайăхрах ĕçлеме пуçларĕ. Унăн çирĕп график пур, ăна коллектив тивĕçлĕн пурнăçласа пырать.

Х. ЛИСИН.

ÇĔМĔРЛЕ. (Хамăр корр.).

Ют çĕршывсенче

„Хĕвеланăçĕнче вăйлăн пырса çапмалла"

Англи хаçачĕсем Европа континентĕнче активлăн кĕрешмелли çинчен

ЛОНДОН, сентябрĕн 29-мĕшĕ. (ТАСС). Англин паллă журналисчĕ Гарвин «Санди экспресс» хаçатра çапла çырать: «Англи халăхне Совет Союзне пулăшу парассине кая хăварса пынипе килĕшме йывăр, Совет Союзĕ вăл питĕ маттур çапăçать тата йывăр жертвăсем тӳсет. Çавăн пеккине халиччен нихăçан та тӳссе курман-ха, тесе шутлаççĕ Англире. Çакă вăл вăйлă, анчах та пулăшусăр хăварнă союзник пирĕн пĕрлехи тăшмана хирĕç хăйĕн пурнăçне шеллемесĕр пĕр пĕччен çапăçнă вăхăтра пирĕн чыслăха варалать».

«Рейнольдс ньюс» хаçат хăйĕн умсатьинче çапла çырать: Англи авиацийĕ Германи промышленноçне пысăк сиен кӳрет, анчах та вăл «хĕвелтухăçĕнчен бронетанковăй дивизисене илсе килтермест. Нацистсем çапăçăва хăйсен çарĕн тĕп вăйĕсене çеç мар, хăйсен мĕнпур резервĕсене те кĕртсе яраççĕ. Германия хăйĕн мĕнпур ресурсĕсемпе усă курас тĕлĕшпе чи юлашки чикке пырса çитнĕ ĕнтĕ. Çакă тĕрĕссине Германи авиацине Африкăран Российăна куçарни çинчен Каиртан пĕлтерекен хыпарсем те кăтартса параççĕ. Гитлерла Çар машини вырăссем паттăррăн хирĕç тăнипе тӳсекен йывăрлăха ӳстерсе ямашкăн хĕвеланăçĕнче вăйлăн пырса çапмалла. Молотов союзлă державăсен—Англипе Америкăн—столицисенче пулнă чухне 1942 çулта Европăра иккĕмĕш фронт тăвас тĕлĕшпе халех тумалли задачăсем çинчен калаçса татăлнăччĕ. Ирĕклĕ тĕнче çав обязательствăна пурнăçа кĕртессине кĕтсе тăрать».

Совет авиацийĕ Будапешта тапăнни çинчен

АНКАРА, сентябрĕн 28-мĕшĕ. (ТАСС). Кунта килекен хыпарсем тăрăх, совет бомбардировщикĕсем Будапештри çарпа промышленность объекчĕсем çине бомбăсем пăрахни Венгри влаçĕсене çеç мар, вĕсен Берлинри хуçисене те пăшăрхантара пуçланă. Ултă уйăха яхăн каялла, Гитлер хушнă тăрăх, Венгрин промышленность компанийĕсене (тĕрĕссипе вĕсенче халь нимĕçсем хуçаланаççĕ) вăрçă предприятийĕсене оккупациленĕ Польшăран Венгрие куçармашкăн нимĕçсен государствин çар хыснинчен чылай пысăк капитал панă пулнă. Гитлеровецсем çапла шутланă: çав предприятисем Венгрире пулни вĕсене хăрушлăхран кăларать, вĕсем çине сывлăшран бомбăсем пăрахассинчен хăтарать, тенĕ. Анчах та совет бомбардировщикĕсем малтан пыра-пыра тапăннисемех çар промышленноçĕн ĕçне нумай пăснă. Будапештра пурăнакан нумай çынсем, вĕсем хушшинче промышленность предприятийĕсенче ĕçлекен рабочисем те чылай, хăрушлăхран тухас тесе хуларан яла каяççĕ. Венгри влаçĕсем вĕсене яла кайма чарасшăн тăрăшаççĕ, вĕсем кайни çар завочĕсен ĕçне нумай чакарĕ тесе хăраççĕ.

Венгри пропаганди совет самолечĕсем çарпа промышленность объекчĕсене çăннипе мĕн тери пысăк сиен кӳнине халăхран пытарма хăтланать пулин те, кунта çакă паллă пулса тăнă: совет самолечĕсем тапăннине пула, сăмахран, Будапешт таврашĕнчи пир-авăр предприятийĕсем, çар заказĕсене туса тăракансенкерсем, пысăк сиен курнă.

США-ра суднăсем тăвасси ӳснĕ

ВАШИНГТОН, сентябрĕн 27-мĕшĕ. (ТАСС). Кăçалхи сентябрĕн 27-мĕшĕпе пĕтекен çулталăк хушшинче Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсенче 488 грузовой судно тунă, вĕсен пĕтĕм водоизмещенийĕ 5.450 пин тонна пулать.

Сентябрь уйăхĕнче 90 грузовой судно тăваççĕ, вĕсен пĕтĕм водоизмещенийĕ 1 миллион тоннăна яхăн пулать.

Президент суднăсем тăвасси çинчен пĕрремĕш хут чрезвычайнăй распоряжени кăларнăранпа (ăна 1941-мĕш çулхи январьте пичетленĕ) Америкăн океансем çинче çӳрекен грузовой пароходсем тăвакан судоверфĕсен производство хăвачĕ виçĕ хут ытла ӳснĕ.

Правительствăн тинĕс комиссийĕ иртнĕ çулталăк хушшинче çĕнĕрен 20 судоверфь тума укçа парса тăнă.

Германире тиф вăйлăн сарăлса пырать

ЖЕНЕВА, сентябрĕн 29-мĕшĕ. (ТАСС). Германирен килекен хыпарсем çакăн çинчен калаççĕ: тиф оккупациленĕ çĕршывсенче çеç мар, Германире хăйĕнче те сарăлса пырать. Тиф чи вăйлă сарăлакан вырăнсенчен пĕри вăл—Варшава пулса тăрать, пĕлтĕр унта темиçе пин çын тифпа чирленĕ. Кăçал тиф пĕтĕм генерал-губернаторствипе сарăлнă. Пĕр Варшавăра кăна кăçал 30 пин çын ытла тифпа чирленине палăртнă. Тиф Югославин темиçе районĕнче те сарăлни палăрнă. Бельгипе Голландире те, темиçе вунă çул хушшинче тифа курмансенкерсенче, халĕ тифпа чирленисем палăра пуçланă.

Бомбардировкăсене пула ишĕлнĕ нимĕç хулисенче, пуринчен ытла Гамбургра, тиф сарăлни Германи влаçĕсене уйрăмах хытă хăратать, Гамбургра темиçе пин çын тифпа чирленине палăртнă. Хĕллехи уйăхсенче унта тиф вăйлăн сарăлма тытăнать.

„Малти енĕн хыçĕнче—чухăнлăх"

ЖЕНЕВА, сентябрĕн 29-мĕшĕ. (ТАСС). Лионри ярмаркăна уçнă чухне Виши правительстви промышленность производствин статс-секретарĕ Бишелон сăмах тухса каланă. Вăл «ярмарка» советне пулăшнăшăн» нимĕçсене мухтаса пĕтернĕ, анчах çавăнтах тата çапла каланă: ярмарка хăйĕн илемлĕ экспоначĕсемпе Францин экономикине палăртса параймасть. Çак япала çинчен шухăшлама кирлĕ мар,—тенĕ. Бишелон.—Час-часах ултавлă малти енĕн хыçĕнче чухăнлăх пытанса тăрать, вăл хăшпĕр енчен вĕçне çитичченех йывăрланнă. Çак чухăнлăх вăл çакăн пек ĕмĕрлĕх чăнлăха кăтартса тăрать: нимĕнле тăрăшни те кирек мĕнле наци экономикин хăшпĕр элементарнăй законĕсене хирĕç пыраймасть»,—тенĕ Бишелон.

Редакцине килнĕ çыру

Колхоз пурлăхне çаратакансене çирĕп ответ тыттармалла

КУКЕÇ. Çĕршывра хаяр çапăçусем пыраççĕ. Пĕтĕм совет халăхĕ çак кунсенче хăйĕн пĕтĕм вăйне фронтпа çĕршыва пулăшнă çĕре хурать. Кашни тӳрĕ колхозникпе колхозница уборка ĕçĕсене хăвăртрах вĕçлессишĕн, государство умĕнчи обязательствăсене парса татассишĕн кунне-çĕрне пĕлмесĕр ĕçлет.

Анчах та Вачалкассинчи Кадыков ячĕпе тăракан колхозра тырпулсене пухса кĕртес ĕçре хăшпĕр колхозниксем чăрмантарса пыраççĕ. Хĕрӳ ĕç вăхăтĕнчех ĕçкĕ-çикĕре çӳресе ĕç дисциплинине пăсаççĕ. Ку çеç те мар-ха, колхоз правленийĕ халăхăн пурлăхне сыхлас ĕçе япăх организациленине пула хăшпĕр колхозниксем колхозăн пурлăхне çаратма тытăннă.

Колхозник Яков Иванов августăн 16-мĕшĕнче Заготзерно пунктне тырă леçме кайнă. Хăйĕн урапи çине вăл 6 михĕ тырă хурса кайнă, пиллĕкĕшне пана, пĕр михĕ тырра (57 килограмм) сутса ĕçсе килнĕ. Вăлах августăн 25-мĕшĕнче государствăна çĕрулми леçме кайнă. Пурĕ çичĕ çатан çĕрулми илсе кайнă, анчах ултташĕ çинчи çĕрулмие çеç государствăна панă, иттине сутнă. Колхоз председателĕ Г. Алексеев, çакăн çинчен пĕлет пулсан та, тӳрĕ мар çынна ĕçрен сирмест. Сентябрь уйăхĕнче те Яков Ивановпа Гурий Савгачкин Шупашкарти армана пĕрле тырă авăртма кайсан 19 килограмм тырра сутса янă.

Колхозăн пурлăхне салатакансене халех ĕçрен пăрмалла, айăпласа тивĕçлĕ ответ тыттармалла.

Колхозник П. МАЛИНОВ.

Выльăх витисене юсамаççĕ

КАЛИНИНО. Районри хăшпĕр колхозсем хĕл çывхарса килнине туймаççĕха. Обществăллă выльăх-чĕрлĕх витисене юсамаççĕ, ăшăтмаççĕ. Туçи Мăратри «Клевер» колхозра витесен тăррисене çил вистесе кайнă, кантăкĕсем çĕмрĕк, стенисем шăтăк-çурăк. Витесен алăкĕсем çĕмĕрĕлсе пĕтнĕ, вĕсене уçса кĕме те май çук. Выльăхсем тăмалли вырăнсем те япăх. Апла пулин те колхоз правленийĕ (председателĕ Пронюкин юлташ) витесене юсас ĕçе халĕ те тытăнман.

Çавăн пекех Уйкас Юнтапари «Новая жизнь», Сăкăтри Буденный ячĕпе тăракан колхозсенче ку ĕç çине сӳрĕккĕн пăхаççĕ. Выльăх витисене хĕле кĕме юсаса хатĕрлес ĕç—паян тумалли ответлă ĕç, ăна уборка ĕçĕсемпе пĕр вăхăтрах тумалла.

Г. МАТВЕЕВ.

--⊙--

РАЙОНРИ ХАÇАТСЕНЧЕН

1-мĕш Ирçери (Етĕрне р.) туллимар вăтам шкулта вĕренекен 12 çулхи Владимиров Феоктист çуллахи каникул вăхăтĕнче уйхир ĕçĕсенче тăрăшса ĕçленипе сентябрĕн 1-мĕш тĕлне 109 ĕçкунĕ ĕçлесе илнĕ. Хăй пĕчĕккĕ пулин те, вăл итем çине лашапа кĕлте турттарать.

«Колхозник юлташĕ».

* * *

Вăрмар районĕнчи колхозсем, ялхуçалăх ĕçĕсене ăнăçлăн вĕçлесе пынă май, Хĕрлĕ Çар фондне тырă хывма тытăнчĕç. Хĕрлĕ Çар фондне «Арабось» колхоз 100 центнер, «Свобода» колхоз 83 центнер, «Хĕрлĕ Шептах» колхоз 37 центнер, Париж Коммуни ячĕпе тăракан колхоз 21 центнер панă.

«Хĕрлĕ ялав».

* * *

Хирпуçĕнчи (Вăрнар районĕ) «Победа» колхозри 1-мĕшпе 5-мĕш бригадăсем пур ĕçсемпе те малта пыраççĕ. Вĕсем тырпулсене пухса кĕртес ĕçе колхозра чи малтан тата кăтартуллă вĕçлерĕç.

1-мĕш бригадăна фронтовик арăмĕ Нина Петрова ертсе пырать. Вăл упăшки И. Шорников фронта кайнă чухне ун вырăнне ĕçлеме юлнă. Ăна упăшки хăй пекех лайăх ĕçлеме хушса хăварнă, çавна вăл пурнăçласа пырать.

5-мĕш бригадăна С. Кузьмин юлташ ертсе пырать. Вăл ку ĕçре колхоз пуçланнăранпах ĕçлет. Унăн ывăлĕ фронтра нимĕç фашизмне хирĕç паттăррăн кĕрешет.

«Социализм çулĕпе».

Вăрлăха мĕнле усрамалла

Килес çул вăйлă тырпул туса илес тесен, лайăх пахалăхлă вăрлăх хатĕрлемелле, ăна пăсăласран лайăх сыхласа усрамалла. Тырпула пăсакан сăлтавсем сахал мар, çавăнпа та вăрлăха лайăх усрасси пысăк задача пулса тăрать.

Тырпула упрамалли условисенчен кирлĕреххи вăл — тырра таса тытни пулса тăрать, мĕншĕн тесен тасамар тырă часах нӳрелсе пăсăлма пултарать. Сăмахран, тырпул тусанлă, тăпраллă, çӳп-çаплă, çумкурăк вăрриллĕ пулсан, унăн пахалăхĕ питĕ чакать. Вăл вара авăртнă çĕрте те, çăкăр пĕçернĕ чухне те, пиçнĕ çăкăра çинĕ чухне те палăрса тăрать. (Чуста лайăх кĕтăнса хăпараймасть, çăкăр лайăх пулмасть.)

Тырпул тасамар тата çумкурăк вăрриллĕ пулни пуринчен ытла вăрлăха пăсать. Ун пек вăрлăх чипер усранă çĕртех чĕрĕлсе каять, вĕриленме пуçлать, пăсăлма тытăнать. Унăн шăтас пахалăхĕ те чакать. Ку вара чи хăрушă япала пулса тăрать.

Кун пек ан пултăр тесен, тырпула итем çинче чухнех лайăх тасатас пулать. Комбайнпа е ытти пысăк машинăсемпе вырса çапнă тырра тепĕр хут сортировка витĕр ярса тасатас пулать. Ахаль машинăпа е алăпа çапнă тырра та сăвăрнă хыççăн сортировкăпа тасатни кирлĕ.

Тасатнисĕр пуçне тырра кирлĕ таран типĕ тытни кирлĕ, мĕншĕн тесен нӳрĕ тырă хăвăртрах вĕриленсе пăсăлма тытăнать. Тырпул нӳрлĕхĕ 15 процентран иртсен, ун таврашĕнче сăвăс пек кăпшанкăсем (долгоносиксем, клещсем) те хăвăртрах ĕрчеме пуçлаççĕ. Çавăнпа та стандарт тăрăх, государствăн складĕсене илекен тĕштырăсен: тулăн, ырашăн, сĕлĕн, урпан, пĕрин, хуратулăн нӳрлĕхĕ 15 процентран иртмелле мар. Нӳрĕлĕх çав хисепрен иртет пулсан, тырра типĕтсе тивĕçлĕ виçене çитерес пулать.

Кĕр йĕпе килнĕ пирки пĕлтĕр нӳрĕ тырпул нумай пулчĕ. Вăл кăçал та пулма пултарать. Çавăнпа кашни колхоз хăйĕн тыррине пăсăласран пысăк тимлĕхпе упрани кирлĕ.

Тырпул мĕнле упранса тăнине пĕлме кашни пилĕк кунтах пурăран е михĕсенчен пробăсем илсе, лабораторисенче сăнаса пăхас пулать. Вара тырпулăн нӳрлĕхĕ 15 процентран иртет пулсан, ăна мĕнле те пулсан (хĕвел çинче, типĕ сывлăшра пăлратса, е сушилкăра) типĕтсе унăн нӳрлĕхне чакармалла. Çанталăк уяр, тулти сывлăш типĕ пулсан, складсен алăкĕсене уçса, типĕ сывлăша складсем витĕр çӳретсе, çав вăхăтрах пурăра выртакан тырра тăтăшах (кунне 5—6 хутран кая мар) пăтраштарса тăмалла. Сăвăс (клещ) е урăх сиенлекен хурт-кăпшанкă ернĕ тырра çийĕнчех складран кăларса, алама тытăнас пулать. Аллани тырăн нӳрĕлĕхне чакарать. Анчах кун пек ĕçе типĕ çанталăкра туни кирлĕ. Йышланса кайсан сăвăссем алланипех пĕтмеççĕ. Вара вăрлăхлăх тырра авăртнă типĕ пурăпа (мел) е урăх имçампа эмеллес пулать. Çимелли тырра апла тума май çук, çавăнпа ăна хăвăртрах вутпах типĕтсе усă курмалла пулать. Кунта çакна та асăрхани кирлĕ: кĕркунне складсенче, амбарсенче сывлăш тултинчен ăшăрах та типĕрех тăрать. Çавăнпа йĕпе, нӳрĕ çанталăкра складсен, амбарсен алăкĕсене уçса пăрахсан, унти сывлăш нӳрелет. Вăл нӳрĕке вара вăрлăхлăх тырă туртса илет те, чĕрĕлсе вĕриленме, унтан пăсăлма тытăнать. Капла ан пултăр тесен, склад таврашĕнче ĕçлекенсене ун пек çанталăкра склад, амбар алăкĕсене уçă хăварма чарас пулать, унта ĕçленĕ чух алăкĕсене тачă хупса ĕçлеме, складсене нӳретме пултаракан япаласенчен — çӳп-çапран, тусан-пылчăкран тасатсах тăма хушас пулать. Кунпа пĕрлех складсенчи ылтăшши шăтăк-çурăксене те питĕрни кирлĕ. Çапла сыхланса ĕçлесе пырсан çеç складсене тулти нӳрĕ сывлăш кĕресрен сыхлама, вăрлăхлăх тырра чĕрĕлсе пăсăласран хăтарма пулать.

Хĕвелпе е типĕ сывлăшпа типĕтеймен тырра авăнра, сушилкăсенче е ăшă çуртра 5—8 сантиметр хулăмĕш сарса типĕтме пулать. Ун пек чух ăшша пĕр пек 40—45 градус тăратас пулать. Анчах кунта çакăн пек хăрушлăх пур: вăрлăхлăх тырă пыллланса пăсăлма, хăйĕн шăтас пахалăхне чакарма пултарать. Апла ан пултăр тесен, типĕтекен тырра тăтăшах пăтратса тăрас пулать. Тата çакна та асăрхани кирлĕ: вăрлăх мĕн чул нӳрĕрех, çавăн чул ăшă та каярах пулмалла. Ахаль чух 40—45 градус таран ăшăпа вăрлăхăн шăтас пахалăхĕ чакмасть, анчах вентиляци начар пулсан, вăл 40 градуслă ăшăпа та пыллланма пултарать. Кирек мĕнле меслетпе типĕтсен те, типĕтнĕ тырра тепĕр хут сортировкăпа сăвăрас пулать.

Вăрлăха складсенче, амбарсенче, кĕлетсенче усраççĕ. Анчах кирек ăçта пулсан та чи малтанах кунта пĕр-пĕр сортлă вăрлăха урăх вăрлăхпа хутшăнтармалла мар. Пĕр сорт, калăпăр, ржано-пшеничнăй гибрид тепĕр сортпа, кĕрхи «Лютесценс 0329» тулăпа хутшăнсан, вĕсен сортлă пахалăхĕ пĕтет. Апла ан пултăр тесен, ун пек сортсене е уйрăм складсене, е пĕр складрах уйрăм пӳлĕмсенче усрас пулать. Уйрăм пурасене хывăс пулсан, вĕсенче çулти хĕррисене çитиччен тултарса лартма юрамасть, апла тусан пĕр-пĕринпе хутăшма та пултараççĕ. Хăш чух пĕр сортлă вăрлăхах тасалăх е шăтас пахалăх енчен пĕр пек пулмасан, вĕсене те уйрăм усрас пулать.

Хăшпĕр вăрлăхсем, сăмахран, ыраш—кĕрхи тулăпа, тулă—урпапа, урпа— сĕлĕпе хутшăнса кайсан, вĕсене пĕр-пĕринчен ниепле те уйăрма çук. Çавăнпа та ун пек вăрлăхсене юнашар пӳлĕмсене хывса усрани пулмалла мар.

Паха сортлă вăрлăха михĕсене тултарса усраççĕ. Анчах ун пек михĕсем çĕтĕлсе пăсăласран сыхланни кирлĕ. Вăл михĕсене складра мĕнле май килнĕ çапла пăрахса тултарма юрамасть, икĕ михĕ хирĕç-хирĕç çыххисене шалалла туса йĕркеллĕ хурса купаласа штабельсем тумалла. Штабельсене тыррăн нӳрĕлĕхне пăхса купалаççĕ, вĕсен çӳллĕшĕнче михĕсем 4—8 йĕрке пулма пултараççĕ. Сывлăш улшăнса тăма, 3 — 4 йĕрке михĕ хурсан штабель варрине типĕ хăма е яка пучăсем хурса тухас пулать. Вăрлăха пӳлĕмсенче (пурасенче) усрас пулсан, тырă купин çӳллĕшĕ 2—2,5 метртан иртмелле мар.

Вăрлăха пăсăлма парас мар тесен, вăл мĕнле упраннине пĕрмай тĕрĕслес пулать, мĕншĕн тесен тырă вăл—чĕрĕ организм, вăл пĕрмай улшăнма пултаракан япала. Çĕнĕ тырă хăвăртрах улшăнма пултарать, çавăнпа ăна кашни кунах кайса пăхса тĕрĕслемелле, кивĕ тырра икĕ-виçĕ кунта пĕрре кайса пăхсан та юрать. Кĕркуннепе çуркунне тăтăшах, хĕлле сайрарах пăхма килет.

Вăрлăх хĕрнипе хĕрменнине пĕлме пурасенче кашни метртах «термоштанг» текен шĕвĕр шалчасем лартса тухаççĕ (унта, шĕвĕр вĕçне градусник лартнă). Анчах вăл пур чухне те пулмасть. Ун вырăнне вара тимĕр е йывăç туясем лартсан та юрать. Вара кирлĕ вăхăтра вĕсене пура тĕпĕнчен кăларса, вĕсем вĕриленнипе тарланине сăнаççĕ. Туясем вĕриленсе тарлани — вăрлăх пăсăла пуçланине пĕлтерет. Ун пек тырра вара пăтратма, машина витĕр алласа кăларма, купан хулăмĕшне чакарса çӳхетме тытăнас пулать, унăн нӳрлĕхне чакарас пулать.

Çапла, вăрлăхлăх тыррăн пахалăхне чакарас мар тесен, вăл мĕнле выртнине (пурăннине) пĕрмай астуса, сăнаса тăни кирлĕ. Вăл ялан таса, типĕ, улшăнмасăр пĕр пек ырă пăрпаллă, пахалăхлă выртчăр.

А. КОЛЬЦОВ,

Госсертфондăн агрономĕ

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

СОВХОЗ „РОСГЛАВВИНО" (гор Чебоксары, ул. Коммунальная Слобода, 21) имеет в продаже посадочный материал разных сортов—яблонь, смородину, малину. Отпуск производится всем гражданам.
9—9 Дирекция.

Чебоксарской артели «Пекарь» срочно требуется главный бухгалтер. Обращаться по адресу: ул. Интернациональная, дом. № 2.
Правление.

ТРЕБУЕТСЯ СЕКРЕТАРЬ-МАШИНИСТКА Чувашской конторе „Сельхозснабжения". Обращаться: ул. Калинина 34 Телефон 0—94. „СЕЛЬХОЗСНАБЖЕНИЕ".
2—1

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары. ул. Володарского, 5 Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редакци секретарĕн — 4—26, пропагандăпа парти пурнăç пайĕн — 3—99, ялхуçалăх пайĕн — 5—31, издательство конторин — 0—23.

НТ 942 Типография № 1 Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР, Заказ № 2. Ф б 58 24 п. н.